(cc) BY



***Денисова Татьяна Витальевна***

канд. филол. наук, доцент

ФГБОУ ВО «Чувашский государственный педагогический

университет им. И.Я. Яковлева»

г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ФОНЕТИЧЕСКИЕ СРЕДСТВА ВЫРАЖЕНИЯ ЭМОЦИЙ В ЧУВАШСКОМ И РУССКОМ ЯЗЫКАХ

***Аннотация****: в статье исследована роль интонации, какофонии, эвфонии, аллитерации, ассонанса в выражении эмоций и эмоционального состояния человека, выявлено, что для русской речи характерны все средства, а в чувашском языке эмоциональность в основном выражается интонацией, аллитерацией и ассонансом.*

***Ключевые слова****: эмоция, эмоциональность, интонация, какофония, эвфония, аллитерация, ассонанс.*

***Аннотаци****: статьяра интонацин, какофонин, эвфонин, аллитерацин, ассонансăн кăмăл-туйăма палăртас ĕçри пĕлтерĕшне тишкернĕ. Вырăс пуплевĕнче вĕсем пурте палăруллă, чăваш чĕлхинче вара кăмăл-туйăма палăртасси интонаци, аллитераци тата ассонанс урлă пулса пырать.*

***Тĕп сăмахсем:*** *интонаци, кăмăл-туйăм, эмоцилĕх, какофони, эвфони, аллитераци, ассонанс*

Чĕлхе – чи кирлĕ хутшăну хатĕрĕсенчен пĕри. Хутшăнура эпир пĕрне-пĕри мĕн çинчен те пулин пĕлтеретпĕр, мĕн çинчен те пулин каласа, ыйтса пĕлетпĕр. Чĕлхене пула çеç эпир шухăшлама, шухăша каласа пама, ыттисене пĕлтерме пултаратпăр.

Чĕлхен тепĕр паха функцийĕ – çыннăн кăмăл-туйăмне палăртмалли, кăтартмалли хатĕр пулса тăни. Кăмăл хусканăвĕ тĕрлĕрен пулать: кулянни, тарăхни, савăнни, тĕлĕнни, пăшăрханни, хăрани, юратни, йĕренни, ӳпкелени, ыратни, курайманни, кӳренни, ылханни, мухтанни т.ыт.те. Эмоцие палăртмалли



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

чĕлхе хатĕрĕ чылай: лексика, фонетика, грамматика. Эпир чăваш тата вырăс чĕлхисенчи эмоцие палăртмалли фонетика хатĕрĕсене тĕпчес тĕллев лартрăмăр.

Пуплев эмоцилĕхĕ интонацирен килет. Интонаци – пуплеве витĕмлĕ тăвас тесе пĕр-пĕр калаçу сыпăкне сасса хăпартса е антарса калани. Сăмах хăйĕн чăн-чăн пĕлтерĕшне контекстра йышăннисĕр пуçне, чĕррĕн, мĕнле интонаципе каланипе те йышăнать. Интонаци сăмаха ытти сăмахсем çумне тачă çыхăнтарса унăн пĕлтерĕшне пуçĕпех тĕрĕслетсе çитерет. Эпир интонаци уйрăмлăхĕсене пĕлмесĕр час-часах фраза шухăшне те пĕлме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен интонаци сăмаха е фразăна пачах урăх шухăш пама пултарать [3].

Тĕслĕхрен: *Вăл Мускавра пурăнать. Вăл Мускавра пурăнать*? *Вăл Мускавра пурăнать! Сегодня хорошая погода. Сегодня хорошая погода? Сегодня хорошая погода!*

Çак вырăс тата чăваш чĕлхисенчен илнĕ ансат тĕслĕхсенчех интонаци пуплевре мĕнле пысăк вырăн йышăннине курма пултаратпăр, вăл предложенисене тĕрлĕрен сĕм тата экспрессилĕх кĕртет. Çак тĕслĕхсене шайлаштарсан акă мĕн курма пулать: пĕрремĕш предложенисем (чăваш чĕлхинче те вырăс чĕлхинче те) пĕр пекех – вĕсем калуллă *(Вăл Мускавра пурăнать. Сегодня хорошая погода)*, çак предложенисенче нимĕнле эмоцилĕх те çук. Иккĕмĕш предложенисенче вара эпир ыйту куратпăр *(Вăл Мускавра пурăнать? Сегодня хорошая погода?)*. Кунта интонаци улшăнать, вăл ыйтуллă пулса тăрать, паллах, çак ыйту çине хурав кирлĕ пулса тухать. Виççĕмĕш предложенисенче вара *(Вăл Мускавра пурăнать! Сегодня хорошая погода!)* интонаци пачах урăхла, кунта эмоципе экспресси сĕмĕ те улшăнать: калаканăн кăмăл-туйăмĕ хаваслă, савăнăçлă. Кунта интонаци çӳллĕрех те вăйлăрах.

Илемлĕ литература чĕлхинче интонаци пĕлтерĕшĕ питех пысăк, мĕншĕн тесен вăл калаçу характерне тумалли май пулса тăрать.

Тĕслĕхрен, вырăс поэзийĕн классикĕн А. С. Пушкинăн «Онегин» поэминче интонаци пысăк вырăн йышăнать:

Я не держу тебя, но *где ты*
Свои проводишь вечера?


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ку тĕслĕхре интонаци йывăрăшĕ *«где ты»* сăмах пĕрлешĕвĕ çине ӳкет, вăл тĕлĕннине, ăнланманнине тата ӳпкелесе каланине кăтартать.

Интонаци предложенин шухăшне улшăнма пултарни çакнашкал тĕслĕхсенче та аван курăнать:

Казнить нельзя, помиловать. Любить нельзя, забыть.

Казнить, нельзя помиловать. Любить, нельзя забыть.

Вырăс чĕлхи эмоцие палăртмалли фонетика хатĕрĕсем шутне *эвфонийăна* кĕртет. Ку термин сасăсемпе çыхăннă. Сасăсем сăмахра мĕнле сасăпа çумăн тăнинчен пĕтĕм сасă илемлĕхĕ, пархатарлăхĕ, янăравĕ килет. Литература терминĕсен словарĕнче «эвфония» сăмаха çапла определени панă: *«Эвфония (от греч. – благозвучие) – звуковая организация художественной речи, приобретающая особое значение в стихах; фонический (звуковой) состав стихотворения. Особенности эвфонии определяются не только формальным благозвучием (неблагозвучным является чрезмерное скопление гласных или согласных звуков), но и задачами содержательности стиха, хотя в русской поэзии начала XX столетия многократно делались попытки установления прямой зависимости между звуком и смыслом»* [23, с. 186]. Тĕслĕхрен,

Рдяны краски, воздух чист:
Вьется в пляске красный лист, –
Это осень, далей просинь,
Гулы сосен, веток свист... *(М.А. Волошин)*

Çапла вара, сасăсен çураçулăхĕ вулакан чĕринче тĕлĕнӳ, савăнăç çуратать.

Эвфонийăна хирĕçле пĕлтерĕшлĕ хатĕр – *какофони.* Литература терминĕсен словарĕнче «какофония» сăмаха çапла определени панă: *«Какофония – это (греч.* kakopbonia *– дурное звучание) неблагозвучие, режущее слух сочетание звуков. Нередко какофония в речи создается назойливым повторением одних и тех же звуков, их скоплением в предложении, не связанным со стилистическим заданием»* [23, с. 190].

Тĕслĕхрен: *Какая река так широка, как Ока? Плакать жалостно о отшествии искреннего своего друга.*


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çак икĕ предложенире [о] сасă уйрăмах вăйлă палăрать. Вăл пуплеве хурлăхлă сĕм кĕртет. Чăваш чĕлхинче вара, вырăс чĕлхипе танлаштарсан, эвфони тата какофони фонетика хатĕрĕсемпе усă курсах каймаççĕ, вĕсем пирĕн чĕлхешĕн пĕлтерĕшлĕ хатĕр шутланмаççĕ.

Кăмăл-туйăма палăртма пулăшакан тепĕр хатĕр – аллитераци, пĕр йышши хупă сасăсем янăрани. Текста вăл янăрав тĕлĕшĕнчен пысăк сулăмлăхпа витĕмлĕх кӳрет [23, с. 6]. Тĕслĕхрен: *Чуть слышно, бесшумно, шуршат камыши. Карели каçĕ калама çук капăр, Карели каçĕ кантăк пек кăвак (Уйăп Мишши).*

Ассонанса та кăмăл-туйăма палăртмалли хатĕр пек пăхма пулать. Вăл – уçă сасăсем пĕрлешни, предложенире е текстра пĕр пек уçă сасăсем пулни. Уйрăмах ассонанс илемлĕ литературăра анлă сарăлнă, унпа çыравçăсем чылай усă кураççĕ:

Тĕслĕхрен:

Тинĕс, тинĕс, вăйлăрах<br>
Хыççăн-хыççăн хум пăрах!<br>
Тамăк вутлăн, тамăк çумлăн,<br>
Вут-кăварлăн, хар-хаяррăн<br>
Тайăн-тайăн, çырăн-варăн,<br>
Хутлă хумлăн сулăн, ыткăн. *(Çеçпĕл Мишши)*

Вырăсла тĕслĕх.

Стало в комнате темно.<br>
Заслоняет склон окно.<br>
Или это снится сон?<br>
Дин-дон. Динь-дон. *( И.П. Токмакова)*

Çапла вара, эмоцие палăртмалли фонетика хатĕрĕсем чăваш тата вырăс чĕлхисенче чылай: интонаци, эвфони, какофони, аллитераци, ассонанс. Вĕсем пуплеве тĕрлĕ сĕм кĕртеççĕ, пуянлатаççĕ, çыннăн тĕрлĕ кăмăл-туйăмне палăртаççĕ. Эмоциллĕ сĕм мĕнле пуласси интонацирен нумай килет. Вырăс тата чăваш чĕлхисенче эмоцие палăртмалли фонетика хатĕрĕсем хушшинче пĕрпек-


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

лĕхсем сахал мар тесе палăртма пултаратпăр. Тĕслĕхрен, интонаци, ассонанс тата аллитераци икĕ чĕлхере пе пĕлтерĕшлĕ, вĕсем илемлĕ литература чĕлхишĕн те, калаçу чĕлхишĕн те палăрулла.

***Список литературы***

1. Андреев Н.А. Чăваш чĕлхин стилистики. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1958. – 216 с.

2. Денисова Т.В. Междометия как средство выражения эмоций в чувашском языке // Национальные языки и литературы в условиях би- и полингвизма: Сборник научных трудов. – Чебоксары: Чуваш. гос. пед. ун-т, 2019. – С. 61–67.

3. Жеребило Т.В. Словарь лингвистических терминов. – Назрань: Пилигрим, 2010. – 486 с.

4. Метин П.Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем. Шкул словарĕ / П.Н. Метин, А.И. Мефодьев. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн изд-ви, 1997. – 80 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)